...-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943
СЕНТЯБРЬ
17
ЭРНЕКУН
185(6422) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Арми генералне РОКОССОВСКИЕ

Центральнӑй фронтри ҫарсем, малалла тапӑнса пырса, паян, сентябрӗн 15-мӗшӗнче, нимӗҫсен Киев патне пымалли ҫулсем ҫинчи оборонин тӗреклетнӗ питӗ кирлӗ пунктне — Нежин хулипе пысӑк чугун ҫул узелне тытса илнӗ.

Нежин хулишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче **Черняховский** генерал-лейтенантӑн тата **П. М. Козлов** генерал-майорӑн ҫарӗсем, танковӑй ҫарсен генерал—лейтенанчӗн **Корчагинӑн** гвардеец-танкисчӗсем тата авиаци генерал-лейтенанчӗн **Руденкӑн** летчикӗсем чапа тухнӑ.

Пуринчен те ытларах ҫаксем чапа тухнӑ:

Голосов генерал-майорӑн 280-мӗш Конотопски стрелковӑй дивизийӗ, **Шкрылев** генерал-майорӑн 132-мӗш Бахмачски стрелковӑй дивизийӗ, **Максимов** полковникӑн 24-мӗш гвардейски механизированнӑй бригади, **Артамонов** полковникӑн 25-мӗш гвардейски механизированнӑй бригади, **Баринов** генерал-майорӑн 26-мӗш Севски гвардейски механизированнӑй бригади, **Силов** подполковникӑн 57-мӗш гвардейски танковӑй бригади, **Крупский** полковникӑн 299-мӗш штурмовой авиаци дивизийӗ, **Иванов** полковникӑн 286-мӗш истребительнӑй авиаци дивизийӗ.

Ҫак ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, НЕЖИН хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче чапа тухнӑ 7-мӗш гвардейски механизированнӑй корпуса, 24-мӗш гвардейски механизированнӑй бригадӑна, 25-мӗш гвардейски механизированнӑй бригадӑна, 57-мӗш гвардейски танковӑй бригадӑна, 299-мӗш штурмовой авиаци дивизине тата авиацин 286-мӗш истребительнӑй дивизине „Нежински" тесе ят парас, вара малашне вӗсене ҫапла чӗнмелле тӑвас:

7-мӗш гвардейски Нежински механизированнӑй корпус,
24-мӗш гвардейски Нежински механизированнӑй бригада,
25-мӗш гвардейски Нежински механизированнӑй бригада,
57-мӗш гвардейски Нежински танковӑй бригада,
299-мӗш Нежински штурмовой авиаци дивизийӗ,
286-мӗш Нежински истребительнӑй авиаци дивизийӗ.
280-мӗш Конотопски стрелковӑй дивизие,
132-мӗш Бахмачски стрелковӑй дивизие,
26-мӗш гвардейски Севски механизированнӑй бригадӑна, нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан ҫапӑҫусенче иккӗмӗш хут чапа тухнӑскерсене, Хӗрлӗ Ялав орденӗпе наградӑлама тӑратас.

Паян, сентябрӗн 15-мӗшӗнче, 20 сехетре, пирӗн Тӑван ҫӗршывӑн столици Мускав НЕЖИН хулине ирӗке кӑларнӑ хамӑрӑн паттӑр ҫарсене ҫӗр ҫирӗм тӑвата тупӑпа вуникӗ хут пӗр харӑс персе Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн Эсир ертсе пыракан мӗнпур ҫарсене, НЕЖИН хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, **тав тӑватӑп.**

Пирӗн Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн пыракан кӗрешӳре вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.
1943 ҫулхи сентябрӗн 15-мӗшӗ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Арми генералне РОКОССОВСКИЕ

Центральнӑй фронтри ҫарсем, малалла тапӑнса пырса, Десна шывӗ урлӑ ӑнӑҫлӑн каҫнӑ та паян, сентябрӗн 16-мӗшӗнче, нимӗҫсен ҫак юханшыв рубежӗнчи оборонин тӗреклетнӗ пысӑк пунктне—НОВГОРОД-СЕВЕРСКИЙ хулине тытса илнӗ.

Ҫапла вара нимӗҫсен Десна шывӗн хӗвеланӑҫ хӗрринче малтанах хатӗрлесе хунӑ оборонине Центральнӑй фронтри ҫарсем меллӗн тата татӑклӑн ҫапӑҫса татса пӑрахрӗҫ.

Десна шывӗ урлӑ каҫассишӗн тата НОВГОРОД-СЕВЕРСКИЙ хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче РОМАНЕНКО генерал-лейтенантӑн, БАТОВ генерал-лейтенантӑн тата ПУХОВ генерал-лейтенантӑн ҫарӗсем чапа тухнӑ.

НОВГОРОД-СЕВЕРСКИЙ хулишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пуринчен те ытларах ҫаксем чапа тухнӑ:

АНДРЕЕВ генерал-майорӑн 102-мӗш Дальневосточнӑй стрелковӑй дивизийӗ, КИСЕЛЕВ генерал-майорӑн 140-мӗш Сибирски стрелковӑй дивизийӗ, СЕНЧИЛО генерал-майорӑн 162-мӗш стрелковӑй дивизийӗ, ОСТАПЕНКО подполковникӑн 478-мӗш минометнӑй полкӗ, ДМИТРИЕВ подполковникӑн 120-мӗш истребительнӑй противотанковӑй артиллери полкӗ, КОВАЛЕНКО подполковникӑн 94-мӗш гвардейски минометнӑй полкӗ, ПОПОВ майорӑн 235-мӗш зенитнӑй артиллери полкӗ, ГАБЕР подполковникӑн 14-мӗш инженерно-сапернӑй бригади, ПОПОВ майорӑн 321-мӗш инженернӑй батальонӗ

(Вӗҫӗ 2-мӗш страницӑра).

Верховный Главнокомандующин ПРИКАЗӖ

Генерал-полковника ПЕТРОВА
Вице-адмирала ВЛАДИМИРСКИЕ

Ҫурҫӗр Кавказ фронтӗнчи ҫарсем, Хура тинӗс флочӗн карапӗсемпе тата чаҫӗсемпе ҫыхӑнса кӗрешсе, хӑюллӑ операци туса, тип ҫӗр ҫинчен пырса ҫапса тата тинӗсрен десант антарса, пилӗк кун хушши хаяррӑн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн паян, сентябрӗн 16-мӗшӗнче, Хура тинӗс ҫинчи паха портпа хулана—НОВОРОССИЙСКА штурмласа тытса илчӗҫ. Ҫав ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 73-мӗш пехотнӑй дивизине, нимӗҫсен 4-мӗш тата 101-мӗш горнострелковӑй дивизийӗсене, румынсен 4-мӗш горнострелковӑй дивизине тата нимӗҫсен тинӗс пехотин портри командисене аркатса тӑкнӑ.

НОВОРОССИЙСК хулишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче ЛЕСЕЛИДЗЕ генерал-лейтенантӑн войскисем, ХОЛОСТЯКОВ контр-адмиралӑн морякӗсем, авиаци генерал-лейтенанчӗн ВЕРШИНИНӐН тата авиаци генерал-лейтенанчӗн ЕРМАЧЕНКОВӐН летчикӗсем чапа тухнӑ.

Пуринчен те ытларах ҫаксем чапа тухнӑ:

ВРУЦКИЙ полковникӑн 318-мӗш стрелковӑй дивизийӗ, АРШИНЦЕВ генерал-майорӑн 55-мӗш гвардейски Иркутски Ленин орденлӗ, виҫӗ хутчен Хӗрлӗ ялавпа наградӑланӑ, РСФСР Верховный Совечӗн ячӗпе тӑракан стрелковӑй дивизийӗ, КОЗЛОВ подполковникӑн тинӗс ҫинчи 83-мӗш Хӗрлӗ ялавлӑ уйрӑм стрелковӑй бригади, ШУРЕНКОВ полковникӑн 5-мӗш гвардейски танковӑй бригади, НКВД войскисен ПИСКАРЕВ подполковник ертсе пыракан 290-мӗш уйрӑм стрелковӑй полкӗ, тинӗс пехотин БОТЫЛЕВ капитан-лейтенант ертсе пыракан 393-мӗш уйрӑм батальонӗ, Хура тинӗс флочӗн сывлӑшҫар вӑйӗсен ГУБРИЙ подполковник ертсе пыракан 11-мӗш штурмовой авиацийӗ, МАКСИМЕНКО майорӑн 88-мӗш гвардейски истребительнӑй авиаци полкӗ, БОЧАРОВ майорӑн 889-мӗш ҫӗрлехи ҫӑмӑл бомбардировочнӑй авиаци полкӗ, торпеднӑй катерсен 2-мӗш рангри капитан ПРОЦЕНКО ертсе пыракан 2-мӗш бригади, хуралта ҫӳрекен катерсен ГЛУХОВ капитан-лейтенант ертсе пыракан 1-мӗш Хӗрлӗ ялавлӑ дивизионӗ, хуралта ҫӳрекен катерсен СИПЯГИН капитан-лейтенант ертсе пыракан 4-мӗш дивизионӗ, АХТЫРЧЕНКО подполковникӑн 81-мӗш гаубицӑллӑ артиллери полкӗ, ПЕТРУНЯ подполковникӑн 69-мӗш гвардейски артиллери полкӗ, ТАРАСОВ полковникӑн 1169-мӗш тупӑллӑ артиллери полкӗ, БАГНЫЧ майорӑн 108-мӗш гвардейски истребительнӑй противотанковӑй артиллери полкӗ, ИВАНЯН подполковникӑн 195-мӗш горновьючнӑй минометнӑй полкӗ, МАТУШЕНКО майорӑн 1-мӗш гвардейски уйрӑм артиллери дивизионӗ, СОЛУЯНОВ капитанӑн 251-мӗш ҫӑмӑллӑн куҫакан уйрӑм артиллери дивизионӗ, МАКАРЯН подполковникӑн 8-мӗш гвардейски минометнӑй полкӗ.

Ҫак ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, НОВОРОССИЙСК хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче чапа тухнӑ 318-мӗш стрелковӑй дивизие, тинӗс ҫинчи 83-мӗш Хӗрлӗ ялавлӑ уйрӑм стрелковӑй бригадӑна, 5-мӗш гвардейски танковӑй бригадӑна, НКВД войскисен 290-мӗш уйрӑм стрелковӑй полкне, тинӗс пехотин 393-мӗш уйрӑм батальонне, 11-мӗш штурмовой авиаци дивизине, 88-мӗш гвардейски истребительнӑй авиаци полкне, 889-мӗш ҫӗрлехи ҫӑмӑл бомбардировочнӑй авиаци полкне, торпеднӑй катерсен 2-мӗш бригадине, хуралта ҫӳрекен катерсен 1-мӗш Хӗрлӗ ялавлӑ дивизионне, хуралта ҫӳрекен катерсен 4-мӗш дивизионне 81-мӗш гаубицӑллӑ артиллери полкне, 69-мӗш гвардейски артиллери полкне, 1169-мӗш тупӑллӑ артиллери полкне, 108-мӗш гвардейски истребительнӑй противотанковӑй артиллери полкне, 195-мӗш горновьючнӑй минометнӑй полка, 1-мӗш гвардейски уйрӑм артиллери дивизионне, 251-мӗш ҫӑмӑллӑн куҫакан уйрӑм артиллери дивизионне тата 8-мӗш гвардейски минометнӑй полка „НОВОРОССИЙСКИ" тесе ят парас, вара малашне вӗсене ҫакӑн пек чӗнмелле тӑвас;

318-мӗш Новороссийски стрелковӑй дивизи,
Тинӗс ҫинчи 83-мӗш Хӗрлӗ ялавлӑ Новороссийски уйрӑм стрелковӑй бригада,
5-мӗш гвардейски Новороссийски бригада,
НКВД войскисен 290-мӗш Новороссийски уйрам стрелковӑй полкӗ,
Тинӗс пехотин 393-мӗш Новороссийски уйрӑм батальонӗ,
11-мӗш Новороссийски штурмовой авиаци дивизийӗ,
88-мӗш гвардейски Новороссийски истребительнӑй авиаци полкӗ,
889-мӗш Новороссийски ҫӗрлехи ҫӑмӑл бомбардировочнӑй авиаци полкӗ,
Торпеднӑй катерсен 2-мӗш Новороссийски бригади,
Хуралта ҫӳрекен катерсен 1-мӗш Хӗрлӗ ялавлӑ Новороссийски дивизионӗ,
Хуралта ҫӳрекен катерсен 4-мӗш Новороссийски дивизионӗ,
81-мӗш Новороссийски гаубицӑллӑ артиллери полкӗ,
69-мӗш гвардейски Новороссийски артиллери полкӗ,
1169-мӗш Новороссийски тупӑллӑ артиллери полкӗ,
108-мӗш гвардейски Новороссийски истребительнӑй противотанковӑй артиллери полкӗ,
195-мӗш Новороссийски горновьючнӑй минометнӑй полк,
1-мӗш гвардейски Новороссийски уйрӑм артиллери дивизионӗ,
251-мӗш Новороссийски ҫӑмӑллӑн куҫакан уйрӑм артиллери дивизионӗ,
8-мӗш гвардейски Новороссийски минометнӑй полк.

55-мӗш гвардейски Иркутски ЛЕНИН орденлӗ, виҫӗ хутчен Хӗрлӗ ялавпа наградӑланӑ, РСФСР Верховный Совечӗн ячӗпе тӑракан стрелковӑй дивизие, пирӗн Тӑван ҫӗршывӑн тӑшманӗсемпе кӗрешсе темиҫе хутчен те чапа тухнӑскере, 2-мӗш степенлӗ СУВОРОВ орденӗпе наградӑлама тӑратас.

Паян, сентябрӗн 16-мӗшӗнче, 20 сехетре, пирӗн Тӑван ҫӗршывӑн столици Мускав НОВОРОССИЙСК хулине ирӗке кӑларнӑ паттӑр ҫарсене хамӑр Тӑван ҫӗршыв ячӗпе ҫӗр ҫирӗм тӑвата тупӑпа вуникӗ хут харӑс персе саламлать.

Хура тинӗс флочӗн карапӗсен те ҫав вӑхӑтрах вуникӗ хут харӑс персе, Хура тинӗс ҫинчи ҫар флочӗн иккӗмӗш базине—НОВОРОССИЙСКА нимӗҫсен фашистла пусмӑрӗнчен ирӗке кӑларнӑ ҫарсемпе карапсене саламламалла.

Питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн Эсир ертсе пыракан мӗнпур ҫарсене, НОВОРОССИЙСК хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, **тав тӑватӑп.**

Пирӗн Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн кӗрешсе вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене вилӗм!

Верховный Главнокомандующи Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.
1943 ҫулхи сентябрӗн 16-мӗшӗ.

И. В. Сталин юлташ французсен Совет Союзӗнчи ҫар миссийӗн пуҫлӑхне Э. Пети бригаднӑй генерала йышӑнни

Сентябрӗн 15-мӗшӗнче СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗ И. В. Сталин юлташ француз нацине ирӗке кӑларас тӗлӗшпе ӗҫлекен комитетӑн Совет Союзӗнчи ҫар миссийӗн пуҫлӑхне Э. Пети бригаднӑй генерала йышӑннӑ. Йышӑнура Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов юлташ пулнӑ.

Фронтри ҫӗнтерӳсем ҫине ӗҫпе ответлеҫҫӗ

ЕТЕРНЕ. Фронтри ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем ҫине ответлесе, колхозниксем уйхирте пысӑк хавхаланупа ӗҫлеҫҫӗ. Мӑн Сӗнтӗрти «Комбайн» колхозра кӑнтӑрла ял хушшинче никама та кураймастӑн. Ватти те, ҫамрӑкӗ те—пурте ӗҫре. Кунта пур колхозниксем те ӗҫкунӗсен пӗрремӗшпе иккӗмӗш срокри минимумне ирттерсе тултарнӑ. Уйхир ӗҫӗсенче ӗҫлесе 56 ҫулхи Иустин Петров кӑҫал 220 ӗҫкунӗ, 15 ҫулхи Павел Солдатов 180 ӗҫкунӗ, фронтовик амӑшӗ 67 ҫулхи Е. Судакова—60 ӗҫкунӗ ӗҫлесе илнӗ.

Колхоз кӗлтесене капана хывса пӗтерчӗ. Пӑрҫа-ясмӑксене ҫапса кӗлетсене кӗртсе хунӑ. Кӗракине кӑҫал пысӑк пахалӑхпа туса ирттернӗ. Государство умӗнчи пур парӑмсене те срокчен парса татнӑ. Халӗ ӗҫкунӗсем тӑрӑх аванс шучӗпе тырӑ валеҫме хатӗрленеҫҫӗ. Ку колхоз Октябрьти социализмлӑ Аслӑ революци XXVI ҫул тултарнӑ тӗле кӑҫалхи ялхуҫалӑх ӗҫӗсене пурне те вӗҫлеме шутлать.

Е. УСМАН.

Государствӑна—815 лав тырӑ

СОВЕТСКОЕ. Сентябрӗн 12-мӗшӗнче пулса иртнӗ воскресникре заготзерно пунктне 815 лавпа 2350 центнер тырӑ илсе пынӑ. Ку ӗҫе мӗнпурӗ 408 ҫын хутшӑннӑ. «Заря коммунизма» колхозран 14 лав пынӑ. Государствӑна тырӑ парас ӗҫре комсомолецсемпе ҫамрӑксем пример кӑтартаҫҫӗ.

А. БЕЛЯЕВА.

ВЦСПС-па Халӑх Комиссариачӗсенче

ВЦСПС-па пӗр Халӑх Комиссариачӗ, Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн 1943 ҫулхи август уйӑхӗнчи итогӗсене пӑхса тухса, Бертош юлташ директор заместителӗ пулса ӗҫлекен завода виҫҫӗмӗш преми памалла тунӑ.

* * *

ВЦСПС тата ССР Союзӗн Ҫӑмӑл промышленность Халӑх Комиссариачӗ, Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн 1943 ҫулхи август уйӑхӗнчи итогӗсене пӑхса тухса, ВЦСПС-па ССР Союзӗн Ҫӑмӑл промышленность Халӑх Комиссариачӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне Ҫӗмӗрлери «Большевик» заводрах (директорӗ Шустин юлташ, парторганизаци секретарӗ Розенберг юлташ, завком председателӗ Павлова юлташ) хӑвармалла тунӑ.

Ҫулталӑкри плана 102 процент пурнӑҫланӑ

КАНАШ. (**Хамӑр корр.**). Инвалидсен «Красный воин» артелӗ 1943 ҫулхи производство программине сентябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне 102 процент пурнӑҫланӑ. Ҫӗвӗ ҫӗлекен цех (заведующийӗ Петров юлташ) август уйӑхӗнчи ӗҫ планне 167 процента ҫити тултарнӑ. Федорова, Москвина стахановкӑсем кашни куллен заданне 200—250 процент тултарса пыраҫҫӗ.

Халӗ артельте социализмлӑ ӑмӑрту ҫӗнӗ ҫӗкленӳпе сарӑлса кайрӗ. Хӗрлӗ Ҫарӑн паттӑр ҫӗнтерӗвӗсемпе хавхаланнӑ рабочисемпе работницӑсем ӗҫ тухӑҫлӑхне кунран-кун ӳстерсе пыраҫҫӗ.

Юлашки кунсенче артельте стахановецсен йышӗ ӳсрӗ. О. Петрова, А. Чернова, А. Матвеева юлташсем иртнӗ уйӑхсенче нормӑна ҫеҫ тултарнӑ пулсан, халӗ вӗсем ӗҫ нормине икӗ-виҫӗ хут ытларах тултараҫҫӗ.

Артель коллективӗ сентябрь уйӑхӗнче ҫулталӑкри планран ирттерсе ӗҫлеме тытӑнчӗ. Ҫак пысӑк ҫитӗнӳ артель руководителӗсем ӗҫе тӗрӗс организацилениннчен те нумай килет. Правлени председателӗ М. Корчагин, производство заведующийӗ А. Морозов юлташсем артель ӗҫне пӗлсе ертсе пыраҫҫӗ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗЕ

Арми генералне РОКОССОВСКИЕ

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра)

Çак çĕнтерĕве яланăха палăртса хăварас тесе, асăннă соединенисемпе чаçсене „Новгород-Северски" тесе ят парас, вара малашне вĕсене çапла чĕнмелле тăвас:

102-мĕш Дальневосточнăй Новгород-Северски стрелковăй дивизи,

140-мĕш Сибирски Новгород-Северски стрелковăй дивизи,

162-мĕш Новгород-Северски стрелковăй дивизи,

478-мĕш Новгород-Северски минометнăй полк,

120-мĕш Новгород-Северски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ,

94-мĕш гвардейски Новгород-Северски минометнăй полк,

235-мĕш Новгород-Северски зенитнăй артиллери полкĕ.

14-мĕш Новгород-Северски инженерно-саперăй бригада,

321-мĕш Новгород-Северски инженернăй батальон.

Тата унсăр пуçне Десна шывĕ урлă каçассишĕн пынă çапăçусенче çаксем чапа тухнă:

КУЗОВКОВ генерал-майорăн 69-мĕш Хĕрлĕ ялавлă Севски стрелковăй дивизийĕ,

УШАКОВ полковникăн 37-мĕш гвардейски стрелковăй дивизийĕ,

ЕНЬШИН генерал-майорăн 37-мĕш стрелковăй дивизийĕ,

СМИРНОВ генерал-майорăн 73-мĕш стрелковăй дивизийĕ,

АЛФЕРОВ генерал-майорăн 137-мĕш стрелковăй дивизийĕ,

ГУДЗЬ полковникăн 8-мĕш стрелковăй дивизийĕ,

КАЗАРЯН генерал-майорăн 74-мĕш стрелковăй дивизийĕ,

ЧИЧКАН майорăн 6-мĕш уйрăм артиллери полкĕ,

ОГАРКОВ майорăн 1168-мĕш йывăр артиллери полкĕ,

ОСТАПОВ полковникăн 6-мĕш уйрăм инженерно-саперăй бригади,

БАРАШ подполковникăн 7-мĕш штурмовăй инженерно-саперăй бригади,

ШКЛЯР подполковникăн 9-мĕш уйрăм понтон-кĕпер батальонĕ,

ПАВЛОВ майорăн 49-мĕш уйрăм понтон-кĕпер батальонĕ,

ФЕДОРОВ майорăн 50-мĕш уйрăм понтон-кĕпер батальонĕ.

Десна шывĕ урлă ăнăçлă каçнăшăн армисен командующийĕсене, çавăн пекех тата чапа тухнă соединенисемпе чаçсен командирĕсене СУВОРОВ орденĕсемпе наградăлама тăратас.

Паян, сентябрĕн 16-мĕшĕнче, 22 сехетре, пирĕн Тăван çĕршывăн столици Мускав Десна шывĕ урлă ăнăçлă каçнă тата НОВГОРОД-СЕВЕРСКИЙ хулине ирĕке кăларнă хамăрăн паттăр çарсене Тăван çĕршыв ячĕпе çĕр çирĕм тăватă тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе саламлать.

Пите чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, Десна шывĕ урлă каçассишĕн пынă çапăçусенче тата НОВГОРОД-СЕВЕРСКИЙ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, тав тăватăп.

Пирĕн Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешӳре вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1943 çулхи сентябрĕн 16-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

СЕНТЯБРĔН 14-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Сентябрĕн 14-мĕшĕнче СТАЛИНО хулинчен хĕвеланăçнерехре (Донбасс) пирĕн войскăсем, малалла ăнăçлăн тапăнса пырса, 20 километртан пуçласа 25 километра çити малалла куçнă, халăх пурăнакан 150 пункта ытла тытса илнĕ. Вĕсем хушшинче ИВАНОВКА, ГАВРИЛОВКА, КĔÇĔН МИХАЙЛОВКА, МĂН МИХАЙЛОВКА, АЛЕКСЕЕВКА, УСПЕНОВКА, ТУРКЕНОВКА, ФЕДОРОВКА ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсем пур.

Азов тинĕсĕн хĕррипе наступлени туса пыракан пирĕн çарсем 15 километра çити малалла куçнă, халăх пурăнакан 20 пункта ытла тытса илнĕ. Вĕсен шутĕнче Сталино облаçĕнчи ВОЛОДАРСКОЕ, МАНГУШ район центрĕсем тата ÇĔНĔ РОМАНОВКА, ÇĔНĔ ГРИГОРЬЕВКА, ЯЛТА, МЕЛЕКИНО, БЕЛОСАРАЙКА ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсем пур.

ПАВЛОГРАД енче пирĕн çарсем, наступлени туса пырса, 6 километртан пуçласа 10 километра çити малалла куçнă. Халăх пурăнакан 70 пункта ытла тытса илнĕ. Вĕсен шутĕнче Харьков облаçĕнчи АЛЕКСЕЕВСКОЕ ятлă район центрĕ, ПЕТРОВСКИЙ, СЕМЕНОВКА, ÇĔНĔ НИКОЛАЕВКА, МĂН АНДРЕЕВКА, ЦЫГЛЕРОВКА ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсем тата БЕЛЯЕВКА, ГАВРИЛОВКА, ДУБОВО ятлă чугун çул станцийĕсем пур.

ПРИЛУКИ енче пирĕн çарсем наступлени туса пырса, уйрăм участоксенче 15 километра çити малалла куçнă. Халăх пурăнакан 70 пункта ытла тытса илнĕ. Вĕсен шутĕнче ЛОХВИЦА хули тата халăх пурăнакан çак пысăк пунктсем пур: ЗАСУЛЬЕ, ПЕРЕКОПОВКА, СВИРИДОВКА, ЛУКА, СТЕПУКИ, ЛУЦЕНКИ, ЯХНИКИ, БЕЗСАЛЫ, ЗАПОДИНЦЫ.

НЕЖИН хули енче пирĕн çарсем, наступлени туса пырса, 5 километртан пуçласа 8 километра çити малалла куçнă, халăх пурăнакан 20 пункта ытла тытса илнĕ. Вĕсен шутĕнче Чернигов облаçĕнчи ДМИТРИЕВКА ятлă район центрĕ тата ХИБАЛОВКА, КЛАДЬКОВКА, АСЛĂ КОШЕЛЕВКА, БЕРЕЗОНКА, КУНАШЕВКА (Нежин хулинчен 5 километр хĕвелтухăçнерехре), РУБАНКА ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсем пур.

ХАРЬКОВРАН кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра пирĕн çарсем малалла тапăнса пырса çапăçнă, уйрăм участоксенче 3 километртан пуçласа 8 километра çити малалла куçнă, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ.

РОСЛАВЛЬ тата БРЯНСК енĕсенче пирĕн çарсем малалла тапăнса пырса çапăçнă тата халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ.

Сентябрĕн 13-мĕшĕнче пирĕн çарсем пур фронтсенче те нимĕçсен 92 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 13 самолетне персе ӳкернĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

СЕНТЯБРĔН 15-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Сентябрĕн 15-мĕшĕнче Киев енче пирĕн çарсем 2 кун хушши пынă хаяр çапăçусем хыççăн НЕЖИН хулипе пысăк чугун çул узелне тытса илнĕ.

ЗАПОРОЖЬЕ тата МЕЛИТОПОЛЬ хулисем енче пирен çарсем ăнăçлăн малалла тапăнса пынă. 10—15 километр малалла куçса, ГУЛЯЙ-ПОЛЕ хулине, Днепропетровск облаçĕнчи ПОКРОВСКОЕ ятлă район центрне, Запорожье облаçĕнчи КУЙБЫШЕВО ятлă район центрĕпе станцине, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 60 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра КОЛОМИЙЦЫ, РАВНОПОЛЬ, ВЕРБОВОЕ, НОВОСЕЛОВКА, РЕЩЕТИЛОВКА, ГАЙЧУЛ, БЛАГОВЕЩЕНКА, БЕЛОЦЕРКОВКА, ЗАХАРЬЕВКА, КИВĔ ДУБОВКА, УРЗУФ ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене илнĕ.

ПАВЛОГРАД хули енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, 10 километртан пуçласа 15 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 120 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра ÇĔНĔ НИКОЛАЕВКА, ЗАКУТНЕВКА, ÇĔНĔ ПЕТРОВКА, КНЯЗЕВО, РОЖДЕСТВЕНСКОЕ, НАДЕЖДИНО, КИВĔ БЛИЗНЕЦЫ, БАРБАЛАТОВО, НИКОЛАЕВКА, АЛЕКСАНДРОВКА, ДОБРОПОЛЬЕ, АЛЕКСАНДРОПОЛЬ ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тата РАЗДОЛЬЕ, КРАСНОПАВЛОВКА, БЛИЗНЕЦЫ ятлă чугун çул станцийĕсене илнĕ.

БРЯНСК енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, ДЯТЬКОВО хулине тата ЛУБОХНА ятлă халăх пурăнакан пысăк пункта тытса илнĕ.

Пирĕн ХАРЬКОВРАН кăнтăр-хĕвеланăçнерехре наступлени туса пыракан çарсем 5 километртан пуçласа 8 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан 20 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра Харьков облаçĕнчи ÇĔНĔ ВОДОЛАГА ятлă район центрне тата КИВĔ ВОДОЛАГА, КНЯЖНОЕ, ОХОЧЕЕ, МЕЛИХОВКА, ПАРАСКОВЕЯ, БЕРЕСТОВАЯ. ЕФРЕМОВКА ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене илнĕ.

ПРИЛУКИ хули енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта, вăл шутра Полтава облаçĕнчи СЕНЧА ятлă район центрне, тытса илнĕ.

РОСЛАВЛЬ хули енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ.

Сентябрĕн 14-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 59 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 80 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Киев енче пирĕн çарсем Нежин хулипе пысăк чугун çул узелне тытса илнĕ. Хула патне пымалли вырăнсене нимĕçсем вăйлă оборона рубежĕ туса хунă тата çĕнĕ чаçсем илсе пынă. Икĕ кун хушши хаяр çапăçусем пынă. Сентябрĕн 15-мĕшĕнче тул çутăлса килнĕ чухне пирĕн çарсем Нежин хулипе чугун çул узелне—Киев патнелле пымалли çулсем çинчи нимĕç оборонин питех те кирлĕ пунктне тытса илнĕ. Совет çарĕсен çак çĕнтерĕвĕсене пула тăшман Днепр шывĕн сулахай енчи чугун çулăн юлашки рокаднăй магистральне (тĕп магистральсене çыхăнтарса тăракан чугун çула) çухатрĕ. Нежин хулишĕн пынă çапăçура нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 3000 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Тыткăна нумай илнĕ.

* * *

Запорожье тата Мелитополь хулисем енче пирĕн çарсем малалла ăнăçлăн тапăнса пынă, Гуляй-Поле хулине, Днепропетровск облаçĕнчи Покровское ятлă район центрне, Запорожье облаçĕнчи Куйбышево ятлă район центрĕпе станцине, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 60 пункта ытла тытса илнĕ. Совет çарĕсен çав тери хăвăрттăн туса пыракан наступленине нимĕçсем контратакăсем туса чарма хăтланни харама кайнă, тăшманăн пехотнăй тата танковăй подразделенийĕсене нумайĕшне аркатса тăкнă. Кун каçичченхи çапăçусенче нимĕçсен 2000 салтакпа офицер ытла вилнĕ. Нимĕçсен 16 танкĕпе бронетранспортерне, хăй тĕллĕн çӳрекен 5 туппине тата 44 хир туппине пĕтерсе тăкнă. Туллимар даннăйсем тăрăх, юсавлă 4 танк, тĕрлĕ калибрлă 40 тупă, боеприпассен 5 складне, çимĕçпе çар пурлăхĕн 7 складне тытса илнĕ. 300 гитлеровеца ытла тыткăна илнĕ.

Пирĕн авиаци тăшманăн çарĕсемпе техникине кунĕн-çĕрĕн пыра-пыра çапнă. Кун каçиччен совет летчикĕсем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 34 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Павлоград хули енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 120 пункта ытла тытса илнĕ. Нимĕç пехотин отрячĕсем, танксемпе, хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсемпе тата халăх пурăнакан çирĕплетнĕ пунктсемпе усă курса, вăйлăн хирĕç тăраççĕ. Пирĕн боецсем, тăшманăн тылне кĕре-кĕре кайса, нимĕç оборонине çĕмĕреççĕ, гитлеровецсен отрячĕсемпе гарнизонĕсене пĕтере-пĕтере тăкаççĕ. Пĕр соединени чаçĕсем, тăшмана каялла ывăта-ывăта ярса, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна ытла пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Вăл шутра 24 тупă, 2 бронетранспортер, пулеметсем тата винтовкăсем нумай.

* * *

Харьковран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, малалла куçнă, халăх пурăнакан 20 пункта ытла тытса илнĕ. Пĕр соединени боецĕсем Харьков облаçĕнчи Çĕнĕ Водолага ятлă район центрне вăркăнса кĕрсе кайнă та урамсенче пулса иртнĕ хаяр çапăçусем хыççăн Çĕнĕ Водолагăна йышăнса илнĕ. Çĕнĕ Водолагăшăн пынă çапăçусенче 800 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. 12 танк тата хăй тĕллĕн çӳрекен 5 тупă персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Урамсенче нимĕçсем тĕрлĕрен хĕçпăшал тата боеприпассем нумай пăрахса хăварнă.

* * *

Прилуки хули енче пирĕн çарсем çаплах малалла куçса пынă. Совет боецĕсем чылай тĕлсенче Сула шывĕ урлă каçнă. Çапла вара вĕсем нимĕçсем çак шыв çинче чарăнса тăма хăтланнине пĕтерсе тăкнă. Пĕр соединени чаçĕсем çав юханшывăн хĕвеланăç енче Полтава облаçĕнчи Сенча ятлă район центрне тата халăх пурăнакан ытти темиçе пункта тытса илнĕ. 13 тупă, 2 радиостанци, боеприпассен складне тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Пĕр çарри танкистсем тăшман тăракан вырăна вăркăнса кĕрсе кайнă та, гусеницăсемпе таптаса, танксене пемелли 15 туппа çĕмĕрсе тăкнă.

* * *

Брянск енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем хаяр çапăçусем хыççăн Дятьково хулине тата халăх пурăнакан ытти чылай пунктсене тытса илнĕ. Çав çапăçусенче нимĕçсен пĕр батальонне ытла пĕтерсе тăкнă. Хĕçпăшалсемпе боеприпассем нумай тытса илнĕ. Совет кавалерисчĕсем вăрманти çапăçура тăшманăн пĕр часне аркатса тăкнă.

* * *

Рославль хули енче пирĕн çарсем малалла тапăнса çапăçнă. Варшава шоссе çулĕнчен çурçĕртерехре пĕр соединени чаçĕсем, малалла куçса пырса, Десна шывĕ патне пырса çитнĕ. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ пунктне тытса илнĕ. Çав çапăçусенче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене, 400 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн авиацин пысăк вăйĕсем тăшманăн пĕр пысăк аэродромне икĕ хутчен пырса тапăннă. Бомбăсем пăрахса, нимĕçсен 50 самолетне çити пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ. Аэродром тĕлĕнче пулса иртнĕ сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 9 истребительне персе ӳкернĕ.

* * *

Пирĕн карапсем Баренц тинĕсĕнче тăшманăн кашни 6 пин тонна водоизмещениллĕ икĕ транспортне шыва путарнă.

Хĕрлĕ ялавлă Балтика флочĕн летчикĕсем тăшманăн транспортне шыва путарнă, пĕр тральщикне сиенленĕ.

* * *

Орел облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ çĕрле нимĕçсен подразделенине тапăннă. Хаяр çапăçура партизансем гитлеровецсене пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă, 60 бензин пичкине, 47 автомашина тата 26 мотоцикл çунтарса янă. Трофейăсем тытса илнĕ. Вăл шутра 9 пулемет, 50 винтовка тата тĕрлĕрен çар пурлăхĕ нумай.

Кантăр татаççĕ

ЭЛЕК. Районри чылай колхозсем уйри тырпулсене вырса пĕтернĕ хыççăн кантăр татма тытăнчĕç. Ехремкасси ялсоветĕнчи «Труд» тата Буденный ячĕпе тăракан колхозсем кантăра çапса шыва хутрĕç. Çавăн пекех çак колхозсенче вăрлăхлăх хăварнă клевера та типтерлĕн пухса кĕртрĕç. Районĕпе илсен, сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне 797 гектар кантăр татнă, вăл татмалли планăн 76 процентне пулать.

Х. ЛИСИН.

Ют çĕршывсенче

США-Н ГОСУДАРСТВЕННАЙ СЕКРЕТАРĔН ПОМОЩНИКĔ ПУЛНĂ МОЛЕЙ ФИНЛЯНДИ ÇИНЧЕН КАЛАНИ

«Нью-Йорк-таймс» хаçат, Скриппс Говард хаçачĕсем тата ытти хăшпĕр хаçатсем финн правительстви йĕтнине кăмăлласçĕ. США-н государственнăй секретарĕн помощникĕ пулнă Молей вара йăлтах урăхла çырать. «Ньюс уик» ятлă журналта пичетленнĕ статьинче вăл финн правительствине питĕ хыта критиклет, финсен пропагандине ĕненсе Американецсене Финляндие кăмăллаттарасшăн тăрăшакан çынсене «çăмăллăн шанакан американецсем» тесе чĕнет. Финн правительстви уйне США пулăшасса шанса тăни çинчен каласа, Молей çапла çырать: пĕр американец Финляндин США-ри официальнăй представителĕпе каласнă чухне—Совет Союзĕ хăйĕн хĕвеланăç енчи чиккисен хăрушсăрлăхĕ тĕлĕшпе кăларса тăратнă хăшпĕр требованийĕсене вăрçă пĕтсен США-н кăмăллăн пăхмалла пулать, тенĕ. Вара финсен çав официальнăй представителĕ «США Финляндие тытса памĕ» тесе шанса каланă. Молей çапла çырать: США Российăна материалсем Арктика шывĕсем тăрăх ярать, çав вăхăтрах Германи салтакĕсем Финляндире меллĕн вырнаçса ларнă; финсем вырăс салтакĕсене вĕлереççĕ, çав вырăс салтакĕсем вĕсем нимĕçсене вĕлерсе нумай американеца çăлса хăварнă-и ген; финсем Германие нацистла çарсемшĕн хăйĕн территорине панă, Совет Союзĕ нимĕçсем хĕссе пынине чăтаймасăр парăнас пек туйăннă вăхăтра финн çарĕсем Совет Союзĕ çине наступлени туса пынă. Малалла Молей çапла çырать: ăнлантарса шантарса каланисем питĕ кăтартуллă. Эпир Российăн чăн-чăн союзникĕсем пулса тăманнине тата эпир 1919 çулхи пек вăрçă хыççăн пĕчĕк çĕршывсене пулăшассине ĕненнипе çавăн пек шантарса калаççĕ.

Малалла Молей çапла çырать: Мускавăн Финлянди тĕлĕшпе йышăннă позицийĕ Ленинграда ют çĕршывсем тапăнасран хӳтĕлесшĕн пулнипе йĕркеленнĕ.

Финсем халĕ те США çине тата хăйсене 1940 çулта кăмăлласа тăнă ытти çĕршывсем çине шанса тăраççĕ курăнать. Совет Союзĕ çавна пĕлет. Финсене Совет Союзне хирĕç пулăшас тесе, Англипе Франция Норвегипе Швеци правительствисенчен экспедициллĕ вăйсене хăйсен территорийĕ урлă яма ыйтнăччĕ, çавна Совет Союзĕ астăвать. Российăн хăватне çав тери çителĕксĕр хак панипе çавăн пек ыйтнă вĕсем, вăл ыйтăва пурнăçа кĕртме килĕшменни питĕ телейлĕ пулса тăчĕ. Хальхи вăхăтра ыйту çакăн пек тăрать: Финляндие вăрçма пăрахтарса, вырăссен 15 дивизине яхăн Финлянди фронтĕнчен илсе кайма май памалла. Паллах ĕнтĕ, вырăссен требованийĕсем хальхи вăхăтра вăрçă хыççăнхисенчен пĕчĕкрех пулĕç. Чăн та ĕнтĕ, Германия Финляндие хистет, анчах та финсем вăрçма пăрахсассăн нимĕçсем хальхи фронта, уйрăмах та хĕл сывхарса килнине пула, тытса тăраяс çук. Финляндия хăйĕн пурнăçĕ çав тери начарришĕн хăй ответлă.

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ВĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, сентябрĕн 14-мĕшĕ (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем Козенца хулине йышăнса илнĕ. Акăлчансен çарĕсем пĕр чăрмавсăрах малалла куçса пыраççĕ, нимĕçсем пĕтерме вырăнсенче çеç кăшт чарăна-чарăна тăраççĕ. Американецсен 5-мĕш армийĕн фронтĕнче йывăр çапăçусем пыраççĕ. Нимĕçсем хаяррăн контратакăсем тăваççĕ, вĕсем хăшпĕр пунктсенче уйччен союзниксен çарĕсем йышăнса илнĕ территорие каялла тытса илнĕ. Таранто хулинчен çурçĕреллерехре тата хĕвеланăçнеллерехре союзниксен çарĕсем активлăн çапăçнă.

ЛОНДОН, сентябрĕн 14-мĕшĕ (ТАСС). Рейтер агентстви Алжиртан пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен çарĕсем Бари хулине йышăнса илнĕ.

ЛОНДОН, сентябрĕн 14-мĕшĕ (ТАСС). Алжирти радио панă хыпарсем тăрăх, Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Рим хулинче хаяр çапăçусем пыраççĕ, тет.

РОДОС УТРАВĔ ÇИНЧЕ ГЕРМАНИ ÇАРĔСЕМПЕ ИТАЛИ ÇАРĔСЕМ ÇАПĂÇНИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 14-мĕшĕ (ТАСС). АФИ агентстви Измир хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, Родос утравĕ çинче нимĕçсемпе итальянецсем хушшинче вăйлă çапăçусем пуçланса кайнă. Додеканес утравĕсем çинче Германи çарĕсем 8000 çынна, Итали çарĕсем 40.000 çынна çитеççĕ.

ИТАЛИН РУМЫНИРИ ДИПЛОМАЧĔСЕНЕ АРЕСТЛЕНĔ

ЛОНДОН, сентябрĕн 14-мĕшĕ (ТАСС). Анкарапан илнĕ хыпарсем тăрăх Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Италин Бухарестри миссийĕн членĕсем Румынирен тухса кайма тăнă, анчах та вĕсене гестапо агенчĕсем Джурджу хулинче тытса арестленĕ.

Пĕлтерӳ

Паян, сентябрĕн 17-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) горкомĕн парткабинетĕнче (Чувашски ур., 6) агитколлективсене ертсе пыракансен семинарĕ пулать.

Семинар çак темăпа пулса иртет: **«Сталин юлташăн Октябрьти Социализмлă Аслă революци XXIV çул тултарнă кунсенче 1941 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕпе 7-мĕшĕнче тунă доклачĕпе тухса каланă сăмахĕ тăрăх пулмалли калаçăва мĕнле ирттермелле».**

Семинара ВКП(б) горкомĕн лекторĕ **Якерсон** юлташ ирттерет.

ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

МУСКАВРИ ГИДРОТЕХНИКА ИНСТИТУЧĔ

(Сĕнтĕрвăрринчи отделенийĕ)

1943—44-мĕш вĕренӳ çулĕ умĕн 1-мĕш курса **студентсем илесси** çинчен пĕлтерет.

Институтăн 1-мĕш курсĕнче вĕренме илнĕ студентсене 1943—44-мĕш вĕренӳ çулĕнче Сĕнтĕрвăрринчи çĕр-йĕркелӳпе мелиораци техникумĕнче Мускаври гидротехника институчĕн профессорĕсемпе преподавателĕсем вĕрентеççĕ, 2-мĕш курсран пуçласа Мускавра вĕренмелле пулать.

Институт пысăк квалификациллĕ инженер-гидротехниксене вĕрентсе кăларать. Вĕсем çак ĕçсене аван пĕлекенсем пулса тухаççĕ: гидроэлектростанцисем, гидротехника сооруженийĕсем, насос станцийĕсем, шыв пăркисем, çил арманĕсем тума, çĕре пăраласа шăтарма, мелиораци ĕçне, торф кăларма пĕлекенсем пулса тухаççĕ. Институт çавăн пекех тата гидромелиораци техникумĕсем валли педагогика кадрĕсем хатĕрлет.

Вăтам шкулсенчен, рабфаксемпе техникумсенчен 1941, 1942-мĕш çулсенче „отлично" тата „хорошо" паллăсемпе вĕренсе тухнисене 1-мĕш курса экзаменсăрах илеççĕ. Ыттисене экзаменпа илеççĕ. Экзамен çак предметсемпе пулать: математика, физика, хими, вырăс чĕлхипе литература.

Экзаменсем сентябрь уйăхĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа 30-мĕшĕччен пыраççĕ.

Вĕренме октябрь уйăхĕн 1-мĕш числинче пуçлаççĕ.

Студентсем валли лайăх столовăй пур, институтăн хăйĕн продовольстви базиĕ, вĕренӳ оборудованийĕ пур.

Вĕренме кĕнĕ студентсем валли хваттер пур, выртса тăма вырăн минтерсем параççĕ. Вĕренӳ отличникĕсене тата Хĕрлĕ Çартан чирлесе таврăннисене стипенди параççĕ.

Тĕплĕрех пĕлес тесен, Сĕнтĕрвăрринчи земтехникум канцелярийĕнчен пĕлме пулать.

Вĕренме кĕме çырнă заявлени тата тивĕçлĕ документсене çак адреспа ямалла: гор. Мариинский Посад, Чувашская АССР, Земтехникум.

ИНСТИТУТ ДИРЕКЦИЙĔ.

УЛАТĂРТИ ФЕЛЬДШЕР ШКУЛĔ

1943—44-мĕш вĕренӳ çулĕ умĕн шкула вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Шкулăн фельдшерсемпе акушеркăсен отделенийĕнче 3 çул вĕренмелле, сестрасемпе массажисткăсен отделенийĕнче пĕр çул вĕренмелле.

Туллимар вăтам шкултан тата вăтам шкултан „отлично" паллăпа вĕренсе тухнисене экзаменсăрах илеççĕ.

Ыттисене экзаменпа илеççĕ. Экзаменсем çак предметсемпе пулаççĕ: вырăс чĕлхи, литература, СССР Конституцийĕ, математика (вăтам шкулăн 7 класĕнче вĕреннĕ чухлĕ). Экзаменсем сентябрь уйăхĕн 22-мĕш числиччен пыраççĕ.

Вĕренме кĕмешкĕн çак документсене ямалла: вĕренни çинчен, метрика свидетельстви, сывлăх çинчен калакан справка.

Адрес çапла: г. Алатырь, Чувашской АССР, Комиссариатская, 39, директору фельдшерско-акушерской школы.

Мускаври 2-мĕш №-лĕ Витамин завочĕн заготконтори Чăваш республикинчи район центрĕсенче шăлан çырли йышăнать, чĕрĕлле те, типĕтнине те илет. Шăлан çырли [illegible] паракансене тăвар, эрех, премĕк-канфект, супăнь тата ытти [illegible] те параççĕ.

Шупашкар хулинче шăлан çырлине кашни кунах йышăнаççĕ. Çак адреспа пырса памалла: Заводская, 43. Телефон 6—84.

2—1.

РАДИО ИТЛЕКЕНСЕНЕ ПУРНЕ ТЕ ТАТА РАДИОНА КОЛЛЕКТИВПА ИТЛЕКЕНСЕН МАССОВИК-ОРГАНИЗАТОРĔСЕНЕ ПĔЛСЕ ТĂМА

Ялсенчи телефон линийĕсем тăрăх радиопередачăсене çак вăхăтра итлĕр:

Ирхине 7 сехетре—Мускав паракан „Юлашки хыпарсене",

Ирхине 7 сехет те 30 минутăра—Шупашкар паракан „Юлашки хыпарсене".

19 сехет те 40 минутăра—„Чăваш Коммуни" тата „Красная Чувашия" хаçатсен умстатьисене.

20 сехет те 20 минутăра—районсене паракан „Юлашки хыпарсене".

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Радиокомитет.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 238 Типография №1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. 6 53 88 п. л.